# **Ача**-пăча библийĕ

**Тăратаканĕ**

# Пĕрремĕш Мăнкун



Çыравçи: **Edward Hughes**

**Иллюстрацилекенĕ**: **Janie Forest**
**Alastair Paterson**

**Адаптацилекенĕ**: **Lyn Doerksen**

Куçаруçи: **www.christian-translation.com**

**Калăплакан компанийĕ**: Bible for Children
**www.M1914.org**

**©2021 Bible for Children, Inc.**
Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе
**илме** е пичетлеме ирĕк пур.

Сăрт аяккинче Хĕ**рарăм** **тăрать,** унăн салхуллă куçĕсем хăрушă сцена çине пăхаççĕ. Унăн ывăлĕ вилет. Амăшĕ Мария пулнă**,** вăл **Иисуса** хĕрес çумне пăталанă вырăнпа **юнашар** тăнă.



**Мĕнле çапла пулма пултарн**ă? **Иисусăн** чаплă пурнăçĕ мĕнле **хăруш**ă пĕтме пултарнă**?** Турă хăйĕн Ывăлне хĕрес çумне пăталаса **вĕлерттерме** мĕнле пултарнă**?** Нивушлĕ Иисус хăй **кам** пулнине йăнăшса **калан**ă? Нивушлĕ Турă ăнăçсăрлăха тӳссе ирттернĕ**?**



Çук! **Иисус** нимĕнле йăнăш та туман. Йĕркесĕр çынсем ăна вилĕм аллине парасса Иисус яланах пĕлнĕ. **Иисус** пĕчĕк чухнех Симеон Марийăна малашне ăна хурлăх кĕтни пирки пĕлтернĕ.





Иисуса вӗлериччен темиҫе **кун маларах** пӗр хӗрарӑм пынӑ та унӑн ури ҫине ырӑ шӑршӑллӑ сӗрӗш **тӑкна.** “Вӑл укҫана уссӑр тӑкать”, **- тесе** ӳпкелешнӗ вӗренекенӗсем.
- “Вӑл лайӑх ӗҫленӗ**,** - тенӗ **Иисус.** - Ҫакна вӑл манӑ**н вилӗм** валли турӗ”. Мӗнле тӗлӗнмелле сӑмахсем!

Çавăн хыççăн Иуда, Иисусăн вун ик вĕренекенĕнчен пĕри, **Иисуса 30** кĕмĕлпе аслă **священниксене сутса** яма килĕшнĕ.



Еврейсен Пасха уявӗнче Иисус хӑйӗн вӗренекенӗсемпе юлашки хут апат ҫинӗ. **Иисус** вӗсене Турӑ ҫинчен тата вӑл хӑйне **юратакансене сӑмах пани** ҫинчен тӗлӗнмелле япаласем каласа панӑ. **Унтан Иисус** вӗсене ҫӑкӑрпа чашӑк панӑ. Ҫак япаласем вӗсене Иисусӑн ӳчӗпе юнӗ ҫылӑхсемшӗн каҫарттарма **панине аса** илтермелле пулнӑ.



Вара Иисус хăйĕн тусĕсене ă**на сутасси пирки тата ун хыççăн вĕсем тарасси пирки калан**ă. -Эпĕ тармастăп**, -** çине тăрсах каланă **Петĕр. -Автан** авăтиччен эсĕ манран виçĕ хут тунăн**, -** тенĕ Иисус**.**



**Каярахпа** çав каçах **Иисус Гефсиман** пахчине кĕл тума кайнă. **Унпа** пĕрле пулнă вĕренекенĕ**сем** çывăрса кайнă. “**Эй Çӳлти Аттем!**.. Çак **курка манран иртсе** кайтăр, анчах эпĕ тăвас тенĕ пек мар, эсĕ тăвас тенĕ пек пултăр.”



Иудăпа пĕрле сасартăк пахчана халăх пырса кĕнĕ. **Иисус** хирĕçлемен**, анчах та Пет**ĕр çыннăн хăлхине касса татнă. **Иисус** çав çынна хăлхинчен **хуллен** сĕртĕннĕ те сыватнă. ă**на арестлени** Туррăн ирĕкĕ **пулнине** Иисус пĕлнĕ.



Халăх Иисуса аслă священник çуртне ертсе кайнă. **Унта иудейсен пуçлăхĕсем Иисуса вĕлермелле** тенĕ. **Петĕр** тарçăсен вучахĕпе юнашар тăрса сăнанă. Çынсем **Петĕр** çине вичĕ **хутчен** пăхса **çапла** каланă: “Эсĕ Иисуспа пĕрле пулнă!” Иисус каланă **пекех, Петĕр** виçĕ хутчен хирĕçленĕ. **Петĕр** ятлаçса **та** илнĕ.



# КИКРИ-КУК!



Çак самантра автан авăтса **ян**ă. Çакă **Пет**ĕ**рш**ĕн Турă сасси пек пулнă. Иисусăн сăмахĕсене **аса илсен Пет**ĕр питĕ хурланса йĕрсе янă.



**Иуда та кулянн**ă. Вăл **Иисус** пĕр çылăха та**,** пĕр айăпа та кĕменнине пĕлнĕ**.** **Иуда 30** кĕмĕл укçина каялла **тав**ă**расш**ă**н пулн**ă, **анчах священниксем** ă**на илмен.**



Иуда укçине пăрахса кайнă **та**-çакăнса вилнĕ.

**Священниксем Иисуса Пилат, рим** пуçлăхĕ, патне илсе пынă. **Пилат** çапла каланă: “Эпĕ **ку çыннăн пĕр** айăпне те тупаймарăм”, **анчах** халăх: “Пăталаттар Ăна! Пăталаттар Ăна!” **- тен**ĕ.



Юлашкинчен Пилат парăннă та Иисуса хĕрес çинче пăталаса вĕлерме йышăннă. **Салтаксем** Иисуса чышкисемпе хĕненĕ, **питрен** сурнă, чăпăрккапа çапнă. Вĕсем вăрăм шăланран йĕплĕ пуçкăшăль туса унăн пуçне пуссах тăхăнтарнă. **Унтан** вĕсем ăна вилтĕр тесе йывăç хĕрес çумне пăталанă.





Çавăн пек вилессе Иисус яланах пĕлнĕ. Çавăн пекех вăл хăйĕн вилĕмĕ хăйне шанакан çынсен çылăхĕсене каçарттарасса пĕлнĕ. Икĕ **преступника Иисуспа юнашар** пăталанă. Пĕри **Иисуса** ĕненнĕ **те** çă**тмаха** лекнĕ. **Теприн** ĕ**ненмен.**





Темиçе сехет асапланнă хыççăн **Иисус:** “Пĕтĕмпех пĕтрĕ”**, -** тесе каланă та вилнĕ**.** Унăн ĕçĕ вĕçленнĕ**.** Юлташĕсем ăна **уйр**ă**млатн**ă вилтăприне пытарнă**.**

Унтан Рим салтакĕсем тупăка пичет пусса хуралланă.  Халĕ ĕнтĕ никам та кĕме **те, тухма та пултараймасть.**





Çакă халап вĕçĕ пулнă **пулсан, в**ăл питĕ хурлантарнă пулĕччĕ**.** **Анчах** та Турă тĕлĕнмелле ĕç тунă**.** **Иисус вилмен**!

Эрне пĕрремĕш кунĕнче ирхине Иисусăн хăш-пĕр вĕренекенĕсем вилтăпринчен йăванса кайнă чула тупнă. Вĕсем **шалалла** пăхсан **Иисуса унта курман.**



Пĕр хĕрарăм вилтăпри патĕнче макăрса юлнă. ăна Иисус курăннă! Çакăн çинчен ыттисене каласа парас тесе вăл хавасланса **каялла** ыткăннă. - “**ИИСУС** ЧĔРĔ! **ИИСУС** ВИЛĔМРЕН ЧĔРĔЛСЕ ТĂНĂ!” – **тенĕ вăл.**



Кĕçех Иисус вĕренекенĕсем патне пырса вĕсене аллисем ç**инче пăтаран юлн**ă çĕввисене кăтартнă**.** **Ку ч**ăн пулнă**.** **ХРИСТОС** ТЕПРЕ ЧĔРĔЛСЕ ТĂНĂ! Вăл **Пет**ĕре хăйĕнчен туннăшăн каçарнă**, тата** хăйĕн вĕренекенĕсене вă**л чĕр**ĕ **пулни** çинчен пурне те каласа пама хушнă**.** **Унтан** вăл Çă**тмаха, хăй** ăç**тан** **килн**ĕ ç**авăнта,** таврăннă**.**

Пĕрремĕш Мăнкун

Турă Сăмахĕнчи, Библири, халап

**ра вырнаçнă**

**Матвей 26-28, Лука 22-24,**
**Иоанн 13-21**

“Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать.”
**Псалом 119:130**

Bĕçĕ

Библири çак истори пире хамăр тĕлĕнмелле Турă çинчен каласа парать, вăл пире пултарнă тата эсир ăна пĕлччĕр тет.

Эпир япăх ĕççем тунине турă пĕлет. Çылăхшăн **наказани**-вилĕм, Анчах Турă сире питĕ хытă юрататать, çавăнпа Вăл Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата сирĕн çылăхăрсемшĕн наказани пама янă. **Унтан** Иисус пурнăç патне таврăннă та киле, Пĕлĕте, кайнă! **Эсир** Иисуса ĕненетĕр пулсан тата çылăхăрсене каçарма ыйтатăр пулсан, вăл çавна тăвĕ! Вăл килĕ те халĕ сирĕнте пурăнĕ, вара эсир унпа ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăр.

Эсир ку чăнлăх пулнине ĕненетĕр пулсан, çакна турра калăр: Хаклă Иисус, эпĕ эсĕ Турă пулнине ĕненетĕп, çылăхăмсемшĕн вилме этем пулса тăтăм, халĕ Вара эсĕ каллех чĕрĕ. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те ман çылăхсене каçар: эпĕ халех çĕнĕ пурнăçпа пурăнма, пĕррехинче санпа яланлăхах пурăнма пултарăп. **Мана** сана пăхăнса тăма, саншăн ачу **пек** пурăнма пулăш. **Аминь.**

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр! **Иоанн 3:16**